**Чечексем**

Чечексем, чечексем...
килсе лартăр эсир.
Килсе лартăр эсир
пĕр чипер лăпкă ир:
кĕп-кĕрен тĕслисем,
кăн-кăвак тĕслисем,
шĕл кăвар пек çунса
тĕлкĕшен хĕрлисем...
Чечексем, чечексем...
килсе лартăр эсир.
Килсе лартăр эсир
пĕр чипер лăпкă ир:
ӳснĕ пуль çывăхри
ĕшнере-çаранта, –
çитеймен-ха типсе
ĕнчĕ пек сывлăм та...
Чечексем, чечексем...
килсе лартăр эсир.
Килсе лартăр эсир
пĕр чипер лăпкă ир...
Кам хăварнă кĕртсе –
пĕлеймерĕм çавна.
Халь ларатăр пăхса,
çунтаратăр чуна!

*Канаш, А. Чечексем / А. Канаш // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 317.*